**1 №-лĕ хушса пани**

## Регионсен шайĕнчи «Реклама тĕнчи» конкурсăн положенийĕ

**I. Пĕтĕмĕшле калани**

Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политики министерствин хушма професси вĕренĕвĕн «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» Чăваш Республикин бюджет учрежденийĕ, «Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕ Пĕтĕм тĕнчери тĕп халăх чĕлхисен çулне халалласа регионсен шайĕнчи **«Реклама тĕнчи»** конкурс (малалла – Конкурс) ирттереççĕ.

Конкурса йĕркелесе пыраканĕ – Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ.

**II. Конкурс тĕллевĕсемпе задачисем:**

– чăваш чĕлхине малалла аталантарасси, халăх хушшинче сарасси;

– пултаруллă шкул ачисемпе çамрăксене тупса палăртасси;

– ачасемпе çамрăксен пултарулăхне аталантарма пулăшасси, реклама ăсталăхĕпе кăсăкланма хавхалантарасси;

– ачасемпе çамрăксен пултарулăхĕпе ăсталăхне йĕркелеме тата вĕсене аталантарма учительсемпе ачасен ашшĕ-амăшне анлăрах явăçтарасси.

**III. Конкурс ирттерме палăртнă вăхăт**

«Реклама тĕнчи» конкурс 2019 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 09-мĕшĕнчен пуçласа юпа (октябрь) уйăхĕн 24-мĕшĕччен пырать.

**IV. Конкурса хутшăнакансем**

Раççей Федерацийĕн регионĕсен тата Чăваш Республикин пĕтĕмĕшле пĕлу паракан вĕренӳ организацийĕсен 7–11-мĕш класĕсенче, професси вĕренĕвĕн организацийĕсенче (колледжсемпе техникумсенче) вĕренекенсем.

**V. Конкурс номинацийĕсем:**

– ***«Чи лайăх буклет»;***
– ***«Чи лайăх афиша»;***
– ***«Чи лайăх буктрейлер»;***
– ***«Чи лайăх социаллă реклама»;***
– ***«Шупашкар 550 çул тултарнине халалланă чи лайăх социаллă реклама»;***
– ***«Чи лайăх коммерци реклами»;***
– ***«Чи лайăх видеоролик»***

**VI. Конкурс ирттермелли йĕрке**

Конкурс чăвашла иртет. Комисси çичĕ номинаципе хатĕрленĕ ĕçсене йышăнать.

Конкурса хутшăнакансен Чăваш Республикинчи пĕр-пĕр организаци (предприяти) е тавар (япала, апат-çимĕç, юр-вар) çинчен коммерци реклами тума юрать. Организацие (предприятие, тавара) .шухăшласа кăларма та пулать, вара ăна чăвашла ят памалла. Уйрăм организацие (предприятие) е таварăн (пĕр-пĕр япалан, апат-çимĕçĕн) пахалăхĕпе уйрăмлăхне хакламалла, ăна ăнлантарса çырса памалла, сĕннĕ номинацисенчен пĕринпе реклама тумалла.

Социаллă (çынсен обществăри пурнăçĕпе çыхăннă) реклама та (сывă пурнăçа тытса пыма, эрех-сăрапа тата наркотиксемпе айкашнине хирĕç кĕрешме, çут çанталăк пуянлăхне, тăван тавралăх илемне упрама тата ыт.те чĕнекен) тума юрать.

Пултарулăх ĕçĕсене кирек епле темăпа та, кирек миçен те хатĕрлеме юрать, анчах та пĕр çын (е ушкăн) кашни номинаципе пĕр ĕç кăна сĕнме пултарать. Ачасем ĕçсене хăйсен тантăшĕсемпе кăна мар, ашшĕ-амăшĕпе те тума пултараççĕ. Социаллă тата коммерци рекламине, афишăна А-3 е А-4 форматпа тумалла. Ĕçе ытларах графика программипесемпе туни вырăнлă (Photoshop, Coreldraw, Adobe Premiere Pro т.ыт. те.). Буклета А-4 форматпа тумалла.

Буктрейлерăн, видеороликăн вăрăмăшĕ 3 минутран ытла пулмалла мар.

Пултарулăх ĕçĕсем çинче ĕçе кам туни, вăл хăш шкултан пулни паллă пулмалла.

Конкурс тӳлевлĕ иртет, хакĕ – 100 тенкĕ. Раççей Сбербанкĕн кирек хăш уйрăмĕнче тӳлеме юрать.

**VII. Хаклав критерийĕсем**

* рекламăн хăйне евĕрлĕхĕ (ытти ĕçрен уйрăлса тăни);
* реклама паянхи пурнăç ыйтăвĕсене тивĕçтерни;
* рекламăн пахалăхĕ;
* рекламăн курăмлăхĕ та илĕртӳлĕхĕ;
* автор правине хӳтĕлекен тата реклама çинчен çырнă саккунсене пăхăнни.

**VIII. Ĕçсене конкурса тăратасси**

Хатĕр заявкăсене, тӳленине ĕнентерекен квитанцие тата конкурс ĕçĕсене (рекламăсене) **chuv.reklama2019@mail.ru** адреспа 2019 çулхи юпа (октябрь) 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Республика тулашĕнчи вĕренӳ организацийĕсенче вĕренекенсем кĕретсĕр (заочно) хутшăнаççĕ. Вĕсен 2019 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 20-мĕшĕччен заявкăпа тата тӳленине ĕнентерекен квитанципе пĕрле конкурс ĕçĕсене (рекламăсене) ярса памалла.

Пултарулăх ĕçĕсене 2019 çулхи юпа (октябрь) 24-мĕшĕче Чăваш Республикин вĕренӳ институтĕнче (428001, Шупашкар хули, М. Горький проспекчĕ, 5-мĕш çурт) халăх умĕнче 2-3 минут хушшинче хӳтĕлемелле (презентацилемелле).

Çамрăк авторсен ĕçсенче конкурсăн номинаци ятне, хăйсен хушаматне, ятне тата ашшĕ ятне, хăш шкулта, миçемĕш класра вĕреннине, район (хула) ятне чăвашла, вырăсла çырмалла. Пултарулăх ăмăртăвне хатĕрлекен вĕрентекенĕн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне кăтартмалла.

Конкурса тăратнă ĕçсене каялла тавăрса памаççĕ, вĕсем йĕркелӳ комитетĕнче тăрса юлаççĕ.

**VIII. Конкурса пĕтĕмлетни тата чыслани**

Конкурс пĕтĕмлетĕвне жюри положенире палăртнă хаклав критерийĕсене шута илсе тăвать. Пĕтĕмлетĕве протокола çыраççĕ. Ăна жюри председателĕ çирĕплетет.

Жюрин номинацисен ятне, йышне улăштарма ирĕк пур. Ку ирĕкпе усă курса йĕркелӳ комитечĕ тивĕçлĕ йышăну тăвать.

Жюри конкурса тăратнă ĕçсене пăхса тухса хак парать, I, II, III вырăнсене палăртать.

Пултарулăх ăмăртăвĕн çĕнтерӳçисене тата призерĕсене дипломсем парса чыслаççĕ, хутшăнакансене тата вĕсене хатĕрлекен вĕрентекенсене пурне те сертификат параççĕ.